В. Г. Родионов

# ХУСАНКАЙ ПУЛТАРУЛĂХĔ ТАВРА

## «Аптраман таврашне» мĕнле çырнă?

«Аптраман тавраш» сăвăлла романа Петĕр Хусанкай хăй 1941-1954 çулсенче çырнă тесе палăртать. Анчах та поэт хăш-пĕр сыпăкĕсене маларах – 1939 çултах çырнă. «Натали кĕпе тĕрлет» сыпăк чи малтан 1939 çулта «Ĕç хĕрарăмĕ» журналта, унтан 1941 çулта «Çамрăк большевик» хаçатра (апрелĕн 15-мĕшĕ) пичетленсе тухнă. Сăвăлла романти ватă Элтиван, Йăкăнат утарçă тата Сар Миккен портречĕсене те каярах «Хамăр ялсем» ятлă ярăма кĕнĕ сăвăсенчех лайăх уçса панă. Çапла вара, эпир сăвăлла романăн хăш-пĕр геройĕсене автор кăтартнă вăхăтран чылай маларах куратпăр.

Петĕр Хусанкай вăрçă умĕнхи çулсенче чăвашсен çав вăхăтри пурнăçне сăнлакан пысăк произведени çырма тĕв тунă. Поэт вăрçă тапраннă кунсенче «Аптраман таврашăн» чи малтанхи вариантне çырма пуçăннă, анчах та ĕçе çурма çултах пăрахăçлама лекнĕ – автора пулас произведени валли суйласа илнĕ жанр килĕшмен. Вăл «Аптраман таврашне» малтанласа сăвăлла драма евĕрлĕрех çырма пуçăннă. Çав вариантра хăш-пĕр геройсен ячĕсем те, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе сăн-пичĕ те урăхларах пулнă-ха. Акă еплерех çырать вĕсем çинчен автор: «*Элюк асатте* – Аптрамансенчен чи ватти, сакăрвуннăра пырать. Хыткан та яштак старик. Салтак. «Якур хĕресĕ» илнĕскер. Хĕресне те, аслашшĕн – тĕп Аптраманĕн – медальне те («Не нам, не нам, а имени Твоему») карчăкĕн çӳпçинче усрать. Хурт ăсти. Сĕрме купăс калать. Ват çын мелĕпе тăсарах калаçать. Хĕрĕнкĕрех чухне е пĕр-пĕр урăм-сурăмпа хавхаланса çĕкленсен – кăшкăрашарах пуплеме те пултарать. Çамки таврa кăшăл – е пушăтран, е пĕр-пĕр хăю татăкĕнчен: «çӳç-пуç тирпейĕшĕн». Сухалĕ çăрах мар, янахĕ çинче кăна.

*Савнепи (Сăпани) асанне* – «чăн-чăн чăвашран», вăрттăн тĕне кĕрсе венчетленнĕскер. Урăх чиркĕве кĕрсе курман. Сурпанне пăрахма пултараймасть. «Пиртен тухнă йăла мар». Сурпан-тавраш уншăн – мăшăрлану палли, тӳрĕлĕхпе варлăх символĕ, хĕрарăм чысĕ, тасалăхĕ. Тĕшмĕш усравçи. Стариккин сăмахĕнчен тухаймастех. Çитмĕлсенче.

*Илле пичче* – Элюк асаттепе Савнепи асаннен ывăлĕ. Аллăран иртсе пырать. Пĕрремĕш тĕнче вăрçин салтакĕ, нимĕç тыткăнĕнче пулнă. Хут пĕлет. Тирпейлĕ колхозник. Ачисене вĕрентсе кăларасшăн тем тӳсме те хатĕр. Сăмаха ытлашши вакламасть.

*Кулине* – Илле писчен мăшăрĕ. Çемçе кăмăллă хĕрарăм.

*Герман (Кервен)* – Аптрамансен ҫăвар уҫҫи. Юратнă ывăл. Кăҫал Мускав университетне пĕтерсе аспирантурăна юлнă. Историк. 24 ҫулта.

*Энтри* – Герман шăллĕ, колхоз пахчаҫи. Миуринран пуҫне никамах та йышăнасшăн мар. Ҫĕр, тăпра ҫынни. Тĕрлĕ гуманитарлă ăслăлăхсем уншăн пулсан – тĕлĕк, халап. Вăтам шкул пĕтерейментерехех пахча-сад ĕҫне вăраннă. 20 ҫулта.

*Натали* – кăҫал вăтам шкул пĕтернĕ. Аслă шкула кĕрес ĕмĕт вĕҫтернĕ хĕрĕн ыйхине. Ҫум ҫумланă хушăранах хатĕрленет. Германпа Энтри йăмăкĕ. 18 ҫулта (малтан «17 ҫулта» тесе ҫырнине туртса хунă. – *В.Р.).*

*Тамара Турхан* – Натали тусĕ. Кăҫал мединститутăн пĕрремĕш курсне пĕтернĕ. 19 ҫулта.

*Палля* – Аптрамансенчен чи кĕҫĕнни. 14-ра. Вĕренет. Ҫулла сӳре сӳрелет, «хĕл каҫмалăх ĕҫ кунĕ тăвать». Сăвă ҫыркалать.

*Иван Ильич Самаев* – колхоз председателĕ. 40 ҫулалла.

Якку – сельисполнитель. Ҫулланнă ҫын. (Малалли картинĕсенче чылай урăх ҫын хутшăнмалла пек)».

Пĕрремĕш вариантра Илле пичче ашшĕ Элюк ятлă пулнă пулсан, ытти вариантсенче ҫав герой Хĕветĕр ятпа тĕл пулать. Малтанхи вариантра Илле мăшăрĕн ячĕ те пулман, автор ҫав герой калаҫăвне «амăшĕ» тесе палăртса пынă. Каярах ҫеҫ «Кулине» тесе хушса ҫырнă. Пĕрремĕш вариантра поэт Энтри сăнарне урăхларах туни курăнать. Кунта вăл кăштах «тĕттĕмрех» пек, пурнăҫ уттинчен юларах пынăн туййăнать. Автор ҫак героя пĕрремĕш вариантра виҫĕ ҫул ҫамрăкрах кăтартнă. Юлашки вариантра Энтри ҫар службинче те пулса курнăскер ĕнтĕ, кĕркунне вăл тăван ялне пуҫĕпех таврăнма ĕмĕтленет. Юлашки вариантра автор Самаева Иван Исаевич тесе чĕннĕ пулсан, малтанласа вăл «Иван Ильич» пулнă-ха. Унăн юратнă сăмахĕ чи малтанхи вариантра «чăваш» пулнă. Каярах автор ҫак «героя» «юлташ» сăмахпа калаҫтарать.

П.Хусанкай «Аптраман тавраш» ятлă сăвăлла драмăна вун пĕр картина таран ҫырнă, пĕрремĕш пайĕ вăрҫă пуҫланнипе вĕҫленнĕ. Ҫырнă картинăсенче Энтри пачах та курăнмасть, ăна вăл, ахăртнех, иккĕмĕш пайĕнче кăтартма шутланă. Сăвăлла пьеса ҫырни хăйĕн картинчен кăларманнине поэт ҫийĕнчех туйса илнĕ пулмалла – вăл ҫав вăхăтрах хăй суйласа илнĕ жанра пăрахăҫласа, «Аптраман тавраш» ятлă поэма ҫырма пуҫăнать. Каярах автор пĕрремĕш вариантри сценăсемпе те усă курать: драма элеменчĕсене кăларса пăрахса вĕҫленеймен драмăри вунпĕр картинăна «Пĕрремĕш кун» ятлă сыпăка кĕртет.

«Илемлĕ литература» журналăн 1942 ҫулта тухнă тăххăрмĕш кĕнекинче П.Хусанкай «Аптраман тавраш» поэмăн уйрăм сыпăкĕсене пичетлесе кăларать.

Автор вĕсене вăрҫă пуҫланнă уйăхсенчех ҫырнă пулнă. Мĕнпурĕ 6 сыпăк кĕнĕ.

«Аптраман таврашăн» иккĕмĕш варианчĕ чылай улшăннă. Кунта Энтри тĕп герой пулса тăрать, паттăрла ĕҫсенче курăнать. Хăй вăхăтĕнче критиксем поэмăри

паттăрла ĕçсенчен чылайăшĕ схемăлла пулнине асăрханă, пичетре çырнă, сӳтсе-явусенче асăрхаттарнă. Çакна поэт каярах хăй те туйса илет. «Разведкăра» сыпăка юлашки вариантран пачах кăларса пăрахать. Ак еплерех çырать вăл «Сывпуллашу» сыпăкра:

Çыра пуçларăм эп пăртаккăн
Салтак çинчен çав çулхине.
Анчах тӳрех калап: салтакăн
Нуши ӳкменччĕ пуç çине.

Салтак кутамккине çакмасăр,
Унпа çунмасăр пĕр вутра,
Сăмах витти те манăн ахăр,
Çукрахчĕ пулĕ çав хутра.

1946 çулта «Аптраман тавраш» ятлă уйрăм кĕнекен тухнă поэмăн ытти сыпăкĕсене те автор хăй вăрçа тухса кайиччченех е кайнă хыççăнах çырнă. Поэмăна 9 çĕнĕ сыпăк кĕнĕ.

Петĕр Хусанкай хăйĕн «Аптраман тавраш» поэмине (ун чухне ăна автор «сăвăлла роман» темен-ха) 1948 çулта тухнă «Сăвăсемпе поэмăсем» ятлă кĕнекене малтанхинчен пĕр улăштармасăр кĕртнĕ.

Поэт çав произведение, тĕпрен илсен, 1954 çулта çырса пĕтернĕ. Çав вăхăтра вăл çĕнĕ произведенире юсамалли-çĕнетмелли вырăнсем чылай пулнине те ăнланнă. Çакна автор пичетленме васкаманнинчен те чухлама пулать. 1954 çулхи июнĕн 16-мĕшĕнче Чăваш кĕнеке издательстви П.Хусанкай патне «Аптраман тавраш» ăн» ал çырăвне июлĕн 15-мĕшĕнчен кая мар хатĕрлесе пама ыйтса çыру çырнă пулнă, унсăрăн çав произведение 1954 çулхи планран кăларса пăрахасси çинчен пĕлтернĕ.

Поэт ал çырăвне издательство кăтартнă вăхăт тĕлне хатĕрлесе çитереймен, вăл «Аптраман таврашне» тепĕр хут тĕплĕн юсаса тухнă, çĕнĕ сыпăксем хушнă. Автор 1954 çулта «Ялавра» сăвăлла романăн «Ыт-тĕкел», 1955 çулта «Тăван Атăлта» «Сарлака çунат» сыпăкĕсене пичетленĕ. Унта вăл вĕсене «Поэма сыпăкĕ» тесе каланă-ха. 1957 çулта «Çамрăк коммунист» хаçатра пичетленнĕ «Ашшĕ çырăвĕ» сыпăка та «Аптраман тавраш» помăран» тесех палăртнă. Çапла вара, автор хăйĕн произведенине 1957 çулччченех поэма тесе шутланă, çапла ятпа пичетленĕ те. Çав çулах асăннă хайлавăн «Коммунист тесе хисеплĕр» сыпăкĕ «Советская Чувашия» хаçатра вырăсла тухать. Унта вара ăна «роман сыпăкĕ» тесе асăнă. Каярах тĕпчевçĕсем çав произведение «сăвăлла роман» жанрĕпе çырнăскер теме пуçланă.

«Аптраман тавраш ăн» тĕп вариантне автор литература аслă курсне вĕренме каяс умĕн юсаса-çырса пĕтернĕ.

1957 çулта уйрăм кĕнекен тухнă «Аптраман тавраше» ятлă сăвăлла романа, ун умĕнхи вариантпа танлаштарсан, тата 16 сыпăк хушăннă. Автор тĕп варианта малтан пулнă «Разведкăра» тата «Натали Петĕре фронтран çырать» сыпăксене кĕртмен.

Петĕр Хусанкай сăвăлла романти геройсен шăпине, хăшĕсен ячĕсене те пурнăçран илнĕ. Акă, Сумбай Петĕрĕн прототипĕ Анат-Тагилте пурăннă Сумбаев Петр Николаевич пулнă иккен. Çакăн çинчен П.Сумбаев çапларах аса илет: «Хусанта вĕреннĕ чухне эпĕ... чăваш чĕлхине вĕренме çӳреттĕм. Хам профком членĕ пулнă май, Петĕре хамăр общежитие вырнаçма пулăшрăм. Çакăнтан вĕренсе тухичченех эпир туслăн пурăнтăмăр.

Пушă вăхăтра Петĕр Çĕпĕрти аптраман чăвашсем çинчен, ман Сумбай хушамат камран, хăçан пулса кайни çинчен мана пĕрмай калаттаратчĕ. Аптраман сăмах вара ун çăварĕнчен каймастчĕ. Асаттепе асанне мĕнле калаçнине темиçе хут ыйтса çыратчĕ. Çакна та калам. Ман аннепе Петĕр Хусанкай амăшĕ те Варвари ятлă пулнă... Каярах, чăваш писателĕсемпе пĕрле тĕл пулсан:

– Паллашăр, ку Сумбай Петĕрĕ, ман герой! – тетчĕ».

Апатраман Энтрийĕн сăнарĕ поэтăн хăйĕн пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Аполлон Иванч Турхан ятлă герой вара Турхан Энтрине аса илтерет. Иккĕшĕ те учитель, Н.И.Ашмарин словарьне тунă çĕре хутшăннă:

Ашмарин словарьне уçатăп:  
Сайра пулин те, скобкăра  
Унта эп хам ята вулатăп, – тет Хусанкай геройĕ.

Петĕр Хусанкай «Аптраман таврашне» хăйĕн «Суйласа илнисен» виççĕмĕш томĕнче кăларма шутланă, çав тĕллевпе 1970 çул тĕлне ал çырăвне те хатĕрлесе хунă пулнă. Унта, тĕпрен илсен, 1957 çулта пичетленĕ варианта кĕртнĕ, хăш-пĕр сăмахсене çеç улăштарнă.

Халĕ Чăваш наука тĕпчев институчĕ Хусанкай çырнисене VI томпа кăларма хатĕрленет. «Аптраман тавраше» V тома кĕмелле.

Петĕр Хусанкайăн 15 çула яхăн çырнă сăвăлла романĕ чăваш тата совет литературин еткерлĕх çӳпçине хурăнчĕ, халăхăмăрăн кун-çулне анлă сăнлакан эпикăлла хайлав пулса юлчĕ.

1976.

## Халал сăввисем

Халал сăввисем – чăваш поэзийĕнче чылаях аталаннă жанр. Вăл е ку çынна, тĕрлĕ юбилей кунĕсене халалласа çырнă хайлав кашни сăвăçăнах пур пулĕ. Çапах та чăваш поэзийĕнчи халал сăввисен чăн-чăн ăсти, ман шутпа, ку таранччен Петĕр Хусанкай çеç пулнă. Кама-кама халалласа çырман-ши аслă поэтăмăр: Н.Я.

Бичурина, К.В. Иванова, Çеçпĕл Мишшине, И. Тăхтипе Ç. Элкере, Н.И. Ашмарин, В.Г. .Егоров тата Н.В. Никольский профессорсене, О.И. Ырсем артисткăна, М.С. Спиридонов художнике, Г.Я. Хирбю композитора...

Çак жанрпа çырнă сăвăсем ыттисенчен вĕсенче халал пуррипе кăна мар, публицистикăлăхпа та уйрăлса тăраççĕ. Çавăн йышши йĕркесене сăвăç хăйĕн кĕнекисене парнеленĕ, çуралнă кунсенче каламалли сăмахсене хатĕрленĕ май шăрçаланă. Ун пек чухне поэт вичкĕнрех пулма, чун тĕпĕнчи шухăшне уççăнрах пĕлтерме май килтернĕ-тĕр. Çакна эпир П.Хусанкайăн ку таранччен пичетре пулман халал сăввисенче те аван куратпăр. Тĕслĕхрен, Шупашкарта литература музейĕ уçăлнă ятпа ирттернĕ митинг хыççăн (ку ĕç К.В. Иванов çуралнă кун пулса иртнĕ) поэтăмăр çапларах экспромт çырса хурать:

Кĕçтенттин вăл – телее!
Халăхăм, çакна пĕлсем.
Аслатасчĕ музее!
Шухăшлар-ха, чăвашсем!

Поэтăмăр паянхи куншăн та çивĕч ыйтăва хускатать: чăваш литература музейĕ халĕ те хăйĕн вырăнне тупайман-ха, анлă литературăна хĕсĕк пӳлĕмсене вырнаçтарсан, килен-каян хăна-вĕрлене литературăмăр çăлтăрĕсемпе паллаштараймăпăр ĕнтĕ.

Хусанкайăн хусанкайлăхĕ вăл малашăн вуншар çулĕсене курма пултарнинче, литературăри объективлăха çурма чăнлăхпа улăштарманнинче аван курăнать. Партин XXVII съезчĕ пирĕн писательсенчен шăпах та çав пурнăç чăнлăхне тĕпе хурса çырма ыйтать. Мĕн тăвăн, П.Хусанкай пурăннă вăхăтра япалана хăйĕн ячĕпе калама, чăвашларах каласан, хурана хура, шурăна шурă теме кашни çыравçăнах хăюлăх çитеймен. Çавăн йышши çынсем çинчен Илпек Микулайне халалланă пĕр сăввинче поэт çапларах çырнă:

«Кассан – турпас, çырсассăн –
Калав», – текеннисем
Пурнаççĕ пит хавассăн,
Пĕр шут: «Ан тиркесем...»
Вĕсемшĕн алăк уçă:
Паян çерем çĕтсе,
Ыран вăл кукуруçă
Çинчен çырать эссе.
Итлет: пуплеççĕ хими
Е ГЭС çинчен таçта, –
Час тавçăрать ун мимĕ,
Сисет вăл «вăхăтрта».

Кунпа поэт темăсемпе спекуляци тăвакан «делецсене» йĕплесе илнĕ. Малалла вăл вĕсене шеллесе те пăхать:

Чăнне калас тесессĕн
Шел çав коллегăма.
Çын питĕ ĕлкĕресшĕн
Саманапа пыма!

Çапларах пулнă вăл пирĕн Хусанкай!

Чăваш литературинче халал сăввисем яланах самана сăн-сăпатне тĕрĕс ӳкернипе палăрса тăнă. Илер-ха К.Ивановăн И.Я. Яковлева халалланă «Хальхи самана» сăввине. Унта поэт «тĕрлĕ çутă тӳммешĕн тĕнки тухакан» чăвашсене, тăван культурăпа чĕлхемĕре хисеплемен «чунĕ хытнă çынсене» хытах ятлать. Каярах чĕлхемĕре хӳтĕлесе кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишши сахал мар сăвă шăратнă. Элкере халалланă пĕр сăввинче (ăна вăл 1966 çулта çырнă) П.Хусанкай классиксен традицине малалла аталантарать, Элкере, тăван сăмахăмăра чунтан-чĕререн савакан çынна, тĕрлĕ «кансĕрлевçĕсем» тапăннинчен хӳтĕлет. Çурма чăнлăха хирĕç тăрса, поэт-трибун çапла ыйтать:

Çапла-им Ленин хушнă, калăр?
Çапла-им сĕннĕ Мускавран?
Чăваш ĕçне тăвар-ха хамăр
Пур танлă халăхпа пĕр тан.

Поэт хăйĕн халалĕнче халăхăмăрăн, унăн культурин çутă пуласлăхне шанса ĕненет:

Чăваш чĕлхин сăвап-хисепĕ
Пин хут та ӳсĕ хальхинчен.
Чăваш ятпах кĕресшĕн эпĕ
Коммунăн аслă хапхинчен!

Пурнăçа хурапа шурра суймасăр çыракан, çĕнĕ йышши çыравçă килессе те шанать поэт:

Йĕри-тавра (эпир кĕтетпĕр!)
Çĕкленĕç çĕнĕ ăстасем.
Çĕр пин сăмахлă вут чĕлхемĕр
Çиçтерĕ вĕçĕмсĕр хĕлхем.

Çак халал сăввинче П.Хусанкай Çеçпĕлĕн вĕри йĕркисене асра тытни юлашки çаврара та аван палăрать:

Çакна шанми пулсан, кăвар пăр
Пулса пăрлантăр ман чĕре!
Яшсем! Сире шанса каятпăр,
Çитерĕр ĕмĕтĕмĕре!

П. Хусанкай хăйĕн халал сăввисенчен улттăшне паллă литературовед, СССР Педагогика наукисен акдемийĕн член-корреспонденчĕ М.Я. Сироткин ячĕпе çырнă. Хальлĕхе пиллĕкĕшĕ пичетленмен-ха. Вĕсенчен пĕринче поэт хăй халал жанрĕпе мĕншĕн çырма кăмăллани çинчен çапла калать:

Хамăр халăх хавалне
Ĕненсе ĕçлекенне
Кăшт çĕклесчĕ кăмăлне,
Тетĕп эпĕ ĕмĕрне.

Çавăнпа е пухура
Е каçхи кĕрекере
Йăпатас йăлам пурах
Сăвăпа хĕре-хĕре.

Çавăн майлă сăввămсем
Вĕçрĕç сывăх та инçе.
Пичетре пулмин вĕсем –
Тусăмсен чĕрисенче!

«Архивсен арчинче таçта» усранса юлнă çав сăвăсене «пулас кандидатсем» тĕпчессе шаннăран мар çырать поэт:

Ах, пĕрре те уншăн мар
Ыратса тапать чĕре:
Чĕрĕ чух сума сăвар
Пĕр-пĕрне çак тĕнчере.
Тĕрмешетпĕр тĕрлĕрен:
Çил те, тăвăл та улать...
Пĕтĕм мул-перекетрен
Ырă кăмăл çеç юлать.

П Хусанкайăн халиччен пичетленмен халал сăввисем пайтах. Шел, вĕсене, тĕрлĕ парне кĕнекисенче, юбилей хучĕсенче упранакан йĕркесене, пĕр çĕре пуçтарса çитереймен-ха. Унăн халал сăввисене тĕпчесси те малашне тытмалли ĕçсен шутĕнче тăрать. Çапах та эпир çакна халех калама пултаратпăр: Хусанкай хăйĕн экспромтла çырнă халалĕсенче те чăн-чăн поэт-гражданин пулса юлнă. Çапла çын пулнă вăл пирĕн Хусанкай.

1987.

**Поэзие тĕпчес ыйтусем**

Поэзие тĕпчес ыйтăва пирĕн ăслăлăхра ку таранччен çителĕксĕр тишкернĕ тесен те йăнăшах пулмĕ. Тĕрĕссипе каласан, хальлĕхе пирĕн сăвва (поэзие) тишкермелли еплерех мелсем пурри çинчен сăмах хускатса калаçни те курăнмарĕ-ха. Эпир поэзие чуххăмăн, кам мĕнле пĕлет, çавăн пек тишкеретпĕр. Паллах, çавăн пек калани пурин те пĕр евĕр тĕпчемелле тенине пĕлтермест. Сăмах кунта тĕпчеври туйăм-сисĕме, интуицие наука тĕпчев мелĕпе çураçтарасси е тĕрĕслесси çинчен пырать.

Кашни çыннăн хăйĕн интуицийĕ, кăмăл еккийĕ тата ыт. те. Çавна май пĕр сăввах икĕ вулавçă икĕ хире хирĕçле хак пама пултарать[1]. Ку тĕлĕшрен проза тишкерӳçисен субьективлăхĕ сахалтарах пек. Сăлтавĕ прозăна тишкермелли мелсемпе меслетсене ытларах тĕпченинче çеç те мар пулĕ. Сăлтавне манăн поэзире хăйĕнче, унăн хăй евĕрлĕхĕнче курас килет.

Мĕн-ши вăл поэзи? Çак ыйтăвăн хуравне шыраса паллă тĕпчевçĕ А.А. Потебня çапларах пĕтĕмлетӳ патне çитсе тухать: поэзи вăл шухăшлав мелĕ, шухăша конкретлă сăнар урлă йĕркелени[2]. Ун шучĕпе, поэзири сăнар (образ) тата пĕлтерĕш (значение) наукăри саккунпа факт хушшинчи çыхăнăва аса илтереççĕ. Çавна пулах поэзири сăнар улшăнусăр, унăн пĕлтерĕшĕ вара куçăмлă иккен. Поэзире сăнар пĕлтерĕшрен яланах пĕчĕк пулмалла, унсăрăн текстри поэзилĕх çухалать, вăл прозăна куçса каять[3].

Поэзи тĕпчевĕшĕн А.А. Потебнян çак пĕтĕмлетĕвĕ питех те хаклă. Поэзире сăнар пĕлтерĕшĕ нумай вариантлă пулни çинчен каланине тĕпе хурсан, эпир вăл е ку талантлă хайлав хăйĕн илемлĕхне вăхăт иртсен те мĕншĕн çухатманнине ăнлантарма пултаратпăр.

А.А. Потебня открытийĕн тепĕр паха енĕ те пур. Хайлавра илемлĕ сăнарпа унăн пĕлтерĕшĕ тачă çыхăнура, уйрăлми тăраççĕ. Апла пулсассăн, çав текста вуласа тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ пулма пултаракан пĕр сăнар çуралать.

Çак меслет вĕрентĕвĕн шайĕнчи концепцие йышăнса, ăна паянхи кун аталантаракан тĕпчевçĕсенчен чи малтан Д.П. Ильина асăнма пулать. Хăйĕн çĕнĕ

---

[1] Сăмах кунта интуицисĕр тӳнтер тишкерӳçĕсем çинчен пымасть. Ун йышши ĕçсенче *П.Хусанкай* çырнисене тӳнтерле ăнланса сивленĕ. Тĕслĕхрен: *Золотов М.* Хамăр çине çаврăнса пăхни те кирлĕ пире (ум сăмах вырăнне). – П.Хусанкай. Уяртсан. – Шупашкар, 1928. – 3-10 с. *Ялавин С.* Хусанкай / С. Ялавин. – Сунтал. – 1928. – 10 №; *Кели Г.* Ялавин критик тĕкĕрĕнчи Хусанкай / Г.Кели. – Сунтал. 1930. 3 №; *Данилов Д.* Хусанкай / Д. Данилов. – Сунтал. 1934. 5-7 №№. Асăннă ĕçсенче поэт хайлавĕсене тӳнтер социологизм куçĕпе пăхса хакланă.

[2] «*Поэзия есть преобразование мысли* (самого автора, а затем всех тех, котореы − иногда многие века − применяют его произведение) *посредством конкретного образа, выраженного в слове*, иначе: *она есть создание сравнительного обширного значения при помощи единичного* сложного (в отличие от слова) ограниченного *словесного образа (знака)*». – Потебня А.А. Эстетика и поэтика / А.А. Потебня. –М., 1976. – С. 333 (палăртни кĕнеке авторĕн. – В.Р.).

[3] «… общая формула поэзии… есть «А (образ)<Х(значение)», то есть между образом и значением всегда существует такого рода неравенство, что А меньше Х. Установление равенства между А и Х уничтожило бы поэтичность, то есть или превратило бы образ в прозаическое обозначение частного случая, лишенного отношения к чему-либо другому, или превратило бы образ в научный факт, а значение в закон» - *Потебня А.А.* Эстетика и поэтика / А.А. Потебня. – М.: 1976. – С.333.

ӗҫӗнче тӗпчевҫӗ поэзири эстетикӑлла феномен – вулавҫӑ пуҫӗнче илемлӗ сӑнар тӗвӗленнин процесӗ тесе пӗтӗмлетет. Ку вӑл, ун шучӗпе, содержаниллӗ формӑран содержаниллӗ туйӑм тата шухӑш ҫурални, илемлӗ сӑнар туни пулса тӑрать[4].

Ҫак тӗпчев меслечӗ ҫинчен ятарласа урӑх статьяра калаҫма кирлине палӑртса А.А. Потебнян тепӗр шухӑшӗ (поэзипе проза уйрӑмлӑхӗ ҫинчен калани) патне таврӑнар. Хӑйӗн паллӑ ӗҫӗнче тӗпчевҫӗ поэзилле шухӑшласа сасӑ формисен кӗвӗлӗхӗ (темп, виҫе, янӑравлӑх) прозӑринчен ытларах кирлине палӑртать[5].

Поэзи тӗслӗхӗсенче тӗпченӗ чухне эпир вӗсенчи *илемлӗ сӑнар* сӑнарлӑ сӑмахсенчен ҫеҫ мар, сӑвӑ кӳлепинчен те (сӑвӑ ҫемминчен, састаш-рифмӑсенчен, интонацирен т. ыт. те.) йӗркеленнине манса каятпӑр. Сӑмахран, П.Хусанкай сӑввисенчи илемлӗ сӑнара вӗсенчи сӑвӑ системине тӗпчесе уҫса пани хальлӗхе ҫук темелле. Вырӑс поэзине тӗпчес ӗҫре те ҫак ҫитменлӗхех палӑртаҫҫӗ. Ҫапах та унта пӗр сӑвва тӗпчесси, тӗпченӗ чухне сӑвӑ компоненчӗсене шута илес туртӑм вӑйлӑрах палӑрать[6].

Поэзири сӑнара туллин уҫса пама содержаниллӗ туйӑма тӗпчемесӗр май ҫук. Содержаниллӗ туйӑма хӑйне палӑртнӑ чухне текста экспрессиллӗ тӑвакан япаласем ҫинчен калаҫни кирлӗ-тӗр. Ҫавсен шутне эпир сӑвӑ ҫеммине, ҫаврасемпе тӗрлӗ сасӑ повторӗсене кӗртетпӗр. Кунтах интонаци те кӗрет. Анчах та эпир малалла вӗсем ҫинчен мар, экспресси тӑвакан тепӗр пулӑм ҫинчен калаҫӑпӑр.

1.

Ҫут ҫанталӑк саккунӗсенчен пӗрне чӑваш чӗлхинче *мехел* сӑмахпа палӑртаҫҫӗ. Мӗне пӗлтерет-ши ҫав сӑмах? П.Хусанкай ҫак ыйтӑва сӑвӑлла хурав панӑччӗ:

> Мехел тени мӗскер тени пулать?
> Ыйтсамӑр ҫумӑр пӗлӗчӗсенчен:
> Мӗн-ма вӗсем кӑвак уярпала
> Юхаҫҫӗ ҫӑвӑнмасӑр тахҫанччен?
> Мехел ҫитмен.

Малалла поэт кайӑк хурсем канма лармасӑр вӗҫни, пахчари улмуҫҫи ҫеҫки ҫурӑлма тӑхтани, сӗрме купӑс калакан каччи хӗлӗхе пӳрнепе пусма васкаманни ҫинчен калать: кашнинчех «мехел ҫитмен» тесе палӑртать. Акӑ юлашкинчен:

> Мехел ҫитсессӗн, ҫумӑр ярӑнать,
> Ҫунатлӑ чун ҫӳлтен ҫӗре анать,
> Чечек папки илемлӗн ҫурӑлать,

[4] Тӗпчевҫӗн пӗтӗмлетӗвӗ вырӑсла туллин ҫапларах: «Эстетический феномен в лирике есть предел зарождения художественного образа в читательском восприятии. Он осуществляется путем «разуплотнения» смыслов слов буквального содержания, стремления их к бесконечности и одномоментного их схватывания» оределенной, неразложимой мыслью. Иначе, это образованное от содержательной формы содержательное чувство и мысль, созидающие в едином процессе художественный образ» – *Ильин Д.П.* Эстетический феномен в поэзии (анализ лирики) / Д.П. Ильин. – Контекст. – 1986. – М., 1987. – С. 152.

[5] *Потебня А.А.* Указ. работа. – С. 364-365.

[6] Ку ыйтупа *Гончаров Б.П.* ҫак ӗҫсене пӑхӑр: Стиховедение и критика / Б.П. Гончаров. – Русская литература. – Л.: 1986. – №2. – С. 123-132; Анализ поэтического произведения. – М., 1987.

Йĕркипеле юрри те юрланать –

Мехел çитсен[7]

(«Тилли юррисем»)

Çут çанталăк мехелĕ вăл пĕр япалах пахалăхĕ енчен çĕнелни, тулса тăкăнни, çитĕнсе çитни т. ыт. те. Çак саккун çын чунĕ-кăмăлĕнче те аван палăрать. Унăн тарăхăвĕ лăпланупа ылмашăнать, хуйхăллă чĕри савăнăçпа тулать. Çапла вара çын кăмăлĕ-туйăмĕ (эмоцийĕ) пĕрре хытать, тепре çемçелет. Çав икĕ хире-хирĕçле туйăм-кăмăл хушшинчи саманта мехел тесе каланă та пирĕн чăваш.

Илемлĕ литература – уйрăмах поэзи – ытти çырулла литературăран (наука, литература, ĕç хучĕсем т. ыт. те.) чи малтан текстсенче экспрессилле кăмăл-туйăм вăйлă пулнипе уйрăлса тăрать. Çавна май унта та эмоцисен улшăнăвĕ пулни кирлех. Анчах та мĕне пула улшăнать-ши илемлĕ хайлавра пĕр-пĕр эмоци?

Сюжетлă хайлавра, паллă ĕнтĕ, çырса кăтартнă ĕçĕн пуçламăшĕ (завязка), аталанса çитнĕ вырăнĕ (кульминаци) тата вĕçленсе пыни (развязка) пур. Кунта кульминаци тĕлне çитиччен ĕç-пуç аталанса, хĕрсе пырать пулсан, кайран вара майĕпен чакса, сивĕнсе ларать. Апла пулсан, çав аталанун чи хĕрсе çитнĕ вăхăтне çут çанталăк мехелĕн тепĕр тĕсех (малалла эпир кульминацине «мехел» тейĕпĕр) темех пулать.

Лирикăра прозăри пек çиелте выртакан сюжет çук ĕнтĕ. Унти экспрессиллĕ кăмăл-туйăма йĕркелекенĕ мĕскер-ши? Мехел тенине тупма пулать-ши çав сăвăсенче?

Ман шутпа, пĕчĕк калăпăшлă сăвăсен мехелĕ икĕ майпа йĕркеленет. Пĕри вăл, прозăри пекех, хайлав варринерех вырнаçнă. Тĕслĕхшĕн П.Хусанкайăн «Атăл хĕрринчи юман» сăввине илсе пăхар:

Эп чăнкă сăртлă Атăл хĕрринче
Тăрри хуралнă юмана сăнарăм:
Хаяр аслатипе ĕмĕрĕнче
Пĕрре çеç мар вăл çапăçнă патваррăн.

Анчах лаштра ларать хăй халиччен.
Йăвантараймĕç: ун тымарĕ тарăн.
Çапла пуплет туйралăх ун çинчен.
Йĕри-тавра карах тăрса яш çаррăн.

Эс, халăхăм, çав ват юман пек мар-и?
Шалта сан тымару, çемйў те йышлă.
Мĕнле хăват сана халь парăнтарĕ?!

---

[7] Çак сăмахпа поэт чи малтан «Хури» поэмăрах усă курнăччĕ: «Ыйтаççĕ: ăçтан, мĕнтен Мехелĕ килет тĕнчен?» // *П. Хусанкай*. Хури. Çирĕм уллтă. – М., 1930. – 9 с.

Манра йăлт эс пани: ĕçченлĕх, чыслăх,
Хаваслăх, хурланса та илкелӳ...
Юман-аттем! Эп – санăн йĕкелӳ[8]

Сюжет йĕрĕ кунта иккĕмĕш çавра вĕçленичченех аталанса пырать те «Эс, халăхăм, çав ват юман пек мар-и?» йĕркере тӳпене çитет, каярах вара ăнлантарса пани каять. Çапла вара, сăввăн мехелĕ илсе кăтартнă йĕркере теме пулать (аталанса çитнĕ сăлтавĕ çинчен кăшт каярах тĕплĕн калаçăпăр).

Çакăн пек тытăм ытларах прозăра е пысăк калăплă сăвă-поэмăсенче тĕл пулать. Çав хушăрах вăл халăхăмăрăн тăватшар йĕркеллĕ юрă сăмахĕсенче те палăрать. Тĕслĕхрен:

Садра арман авăрать.
Çăнăх тухни курăнмасть
Инçе çула хĕр кайсан
Килни-кайни курăнмасть[9]
(Уявра калакан кĕвĕсем)

Кунта малтанхи икĕ йĕрки çут çанталăк çинчен, тепĕр иккĕшĕ çын çинчен калаççĕ. Çав танлаштару чиккинче (иккĕмĕшпе виççĕмĕш йĕркесен хушшинче) эпир аталану хăпарса çитнине куратпăр. Эппин, поэзири экспрессиллĕ шухăш-кăмăла параллельлизм та тума пулăшать. П.Хусанкайăн «Атăл хĕрринчи юман» сăввинче те çавнах куртăмăр: малтанхи пайĕнче (икĕ çаврара) çут çанталăк пулăмне ӳкерсе кăтартнă, юлашки пайĕнче вара çав ӳкерчĕк урлă танлаштару тунă. Ку ĕнтĕ П.Хусанкай халăх сăввине поэтикипе, илемлĕх мелĕсемпе ăнăçлă усă курнине кăтартакан тĕслĕх.

П.Хусанкайăн хăш-пĕр сăввисем мехел тĕлĕнче вĕçленеççĕ, урăхла каласан, вĕсенче ĕç-пуç хăй вырăнне ларни, кульминаци хыççăнхи развязка çук. Çакă вара экспрессие чакарас тесессĕн вуласа тухнă хыççăн кăштах шухăшласа ларнине ыйтать. Тен, çавна пулах, хăш-пĕр сăвăсене вуланă хыççăн çийĕнчех теприсене вулама пуçăнма çук. Ку вăл лирикăн уйрăмлăхĕ-тĕр.

Çапах та чылай сăвăра (лирикăра) мехел саманчĕсем çаврасерен е йĕркесеренех пулса пыраççĕ. Çав кульминацисем содержанипе пачах çыхăнмасан та пултараççĕ, сюжета та аталантармаççĕ. Вĕсем сăввăн туйăмлă юхăмне, кĕвĕлĕхне йĕркелеççĕ. Силлабикăлла (тан сыпăклă) сăвăра экспресси хăпарнипе аннине, интонацие йĕрке варринчи е вĕçĕнчи чарăнусем палăртса пыраççĕ:

Лаштра кăна хурăнне
Сĕткен кĕрсен çуркунне
Пуртă сасси хăратать

[8] *Хусанкай П.* Суйласа илнисем / П.Хусанкай. 1 т. – Шупашкар. 1968. – 529 с. Ку сăвва поэт 1953 çулта çырнă. Вăл вăхăтра вăл ытларах сюжетлă хайлавсемпе ĕçленĕ.
[9] *Тимофеев Г.* Тăхăрьял / Г. Тимофеев. – Шупашкар, 1972. – 334 с.

Ӳссе ҫитсен хӗрӗнне
Пит ҫӑмарти хӗрлине
Ял юмаххи шуратать

Хусанкай ҫак сӑвва халӑх юррисен кӳлепипе усӑ курса ҫырнӑ[10]. Йӗркесенчи малтанхи тӑватӑ сыпӑк хыҫҫӑн пӗчӗк чарӑну (/) тата тепӗр виҫӗ сыпӑк хыҫҫӑн вара пысӑкрах чарӑну (//) пур. Ҫапла вара, кашни йӗрке сыпӑксен икӗ ушкӑнне пайланать: 4 + 3. Ҫав сыпӑксен ушкӑнӗ пӗр-пӗринчен сасӑ тонӗ, сулӑмӗ шайӗпе те уйрӑлса тӑрать. Йӗрке вӗҫӗнчи сыпӑк тӑсӑмлӑрах пек, ҫавна май сыпӑксен икӗ ушкӑнӗн пӗрлӗхӗ палӑрать.

Куртӑмӑр ӗнтӗ, йӗркесерен 4 + 3 сыпӑк ушкӑнӗсем пулса пыни хӑйне евӗр ҫемӗ йӗркелет, ҫав сӑвӑ компоненчӗ сӑмахсене экспрессилӗх, туйӑмлӑх кӗртет.

Ҫак сӑвӑ ҫемми содержанипе пачах та ҫыхӑнман теме ҫук ӗнтӗ. Илсе кӑтартнӑ тӗслӗхре, авӑ, эпир кашни шухӑш пайӑрки виҫшер йӗркене ҫыхса пынине куратпӑр. Малтанхи икӗ йӗркинче интонаци хӑпарса, ӳссе пырать, виҫҫӗмӗшӗнче вара анать, тӑваттӑмӗшпе пиллӗкмӗшӗнче ӳсет, улттӑмӗшӗнче каллех анать. Ҫакӑ вӑл пуплеври шухӑш тӗшшисене тупма май парать: пуртӑ сасси, ял юмаххи. Шӑпах та ҫак сӑмахсем урлӑ эпир сӑвӑри тӗп шухӑша ӑнланса илетпӗр. Акӑ хайхи сӑвӑ кӳлепи сӑвӑри шухӑша уҫса пама еплерех пулӑшма пултарнине куртӑмӑр та.

Силлабо-тоникӑллӑ сӑвӑра экспрессиллӗхе, ҫемӗ йӗркеленӗвне пусӑмлӑ тата пусӑмсӑр сыпӑксен ылмашӑвӗ йӗркелет. Кунта паузӑпа йӗрке вӗҫӗнчи сыпӑк тӑсӑмӗ вырӑнне пусӑмлӑ сыпӑксем мала тухса тӑраҫҫӗ:

Вуншар / ҫулпа / шутлатпӑр / ӗмӗре //
Ак тепӗр / вунӑ ҫул / вӗҫсе / ӑсанчӗ //
Туссем / сайраланаҫҫӗ / ҫулсерен //
Малта / ҫаплах / йӑлтӑртататать-ха / шанчӑк //

Йӗркери пусӑм ушкӑнӗсем ытларах чухне уйрӑм сӑмахсенчен йӗркеленеҫҫӗ. Пусӑмлӑ сыпӑкӗ сасӑ тонӗ тӗлӗшӗнчен улшӑнма, ахаль калаҫура тӗл пулнинчен вӑрӑммӑнрах илтӗнме тӑрӑшнине палӑртмалла[11].

Чӑваш силлабо-тоники вырӑссен ҫавӑн йышши сӑввинчен чи малтан пусӑмлӑ сыпӑксем ыттисенчен тӑсӑмлӑрах пулнипе уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Урӑхла каласан, пусӑм ушкӑнӗнчи пӗр сыпӑка эпир тӑсарах, янӑрав енчен улӑштарарах паратпӑр. вырӑс сӑввинче пусӑмсем тӑсӑмсӑр, хӑвӑрттӑн, ҫав хушӑрах вӑйлӑ илтӗнеҫҫӗ.

Ҫапла вара, чӑваш силлабо-тоникӑллӑ сӑввине халӑх силлабикӑллӑ хӑш-пӗр енӗсем те кӗрсе кайнӑ. Ҫапах та пӗрремӗшсенче йӗркери калаҫу интонацийӗ вырӑнне сӑмахсене татса калани, ҫавна май унта тӑсӑмлӑ сыпӑксем темиҫе те тӗл пулни тӗпре тӑрать. Ку вӑл халӑх сӑввинче ҫук ен.

---

[10] Кунта виҫӗ ҫавраллӑ сӑввӑн пуҫламӑшне илсе кӑтартнӑ.
*Хусанкай П.* Мехел / П. Хусанкай. – Шупашкар, 1987. – 12 с. / Сӑввине авторӗ 1922 ҫулта хайланӑ.

[11] Силлабо-тоника сӑввин янӑравлӑхне, ҫемӗ йӗркеленӗвне пирӗн хальлӗхе ҫителӗксӗр тӗпченӗ. Ҫавӑнпа та ҫакӑнта каланисем малтанхи сӑнав тӗслӗхӗсем ҫеҫ пулнине палӑртмалла.

Ман шутпа, силлабо-тоникăлла сăвăра халăх сăввинче яланах палăракан, чĕлхерен хăйĕнчен тухса тăракан эмоци юхăмĕ çухалать. Çакă чылай чухне йĕркесенче çемĕ мехелĕ хăй вырăнĕнче ларманран килет пулас.

Мĕнле çемĕ мехелĕн вырăнĕ çинчен пырать-ши сăмах?

Халăхсен авалхи синкретикăлла искусствинче, Леонардо да Винчи каланă терминпа усă курсан, ылтăн касăк (золотое сечение) принципĕ пуç пулса тăнă. Çав принцип кӳлепе йĕркелессипе тачă çыхăннă. Вăл принциппа музыкăра та, архитектурăпа та, халăх поэзийĕнче те тухăçлă усă курнă. Çав принципăн тĕп палли акă мĕнре: хуть те мĕнле аталану та вăхăтăн виççĕмĕш чĕрĕкĕччен хĕрсе, хăпарса пырать. Шăп та çав виççĕмĕш чĕрĕкре кульминаци (эпир ăна мехел терĕмĕр) саманчĕ çитет. Çав самант ылтăн касăк точки пулать те ĕнтĕ. Çав икке пайланнă татăкăн малтанхи пайĕ 0, 618, кайранхи пайĕ 0,382 вăрăмăш[12].

Çак мехел илемлĕ хайлавра асăннă пропорципе тĕл пулсан çеç вулавçă чĕрине чăннипех хускатма, илемлĕхе туйтарма пултарать. Кульминаци вунă пайран малтанхи улттăшĕнче хĕрсе пырсан, кайранхи тăватă пайĕнче ерипен сивĕнет пулсассăн çеç эпир лăпкăлăх, килĕшӳлĕх туйма пултаратпăр иккен. Çакă вăл çын психикипе çыхăннă пулăм.

Халĕ сăмаха çемĕ мехелĕ çине куçрарар. Сăвă çеммин йĕркеленĕвĕнче те мехел вырăнĕ пурах-тăр. Аса илер-ха халăх юррисенчи çемĕ йĕркеленĕвне. Юрă сăввисен йĕркисем пирĕн чылай чухне 4 + 3 кӳлепеллĕ сыпăк ушкăнĕсенчен тăрать. Е тата 7 + 4 кӳлепеллисем те (ытларах анатри чăвашсен) тĕл пулаççĕ. Çав сыпăк ушкăнĕсен пропорцийĕ халăх сăввинче çирĕпленнин тĕп сăлтавне те мехел (ылтăн касăк) принципĕнче курмалла-тăр. Урăх мĕнпе ăнлантарма пулать-ши çав архитектоникăллă сăвă йĕркисем тĕнчери тĕрлĕ халăхсен (пĕр-пĕрине нихăçан та хутшăнман халăхсен) пуррине.

Çемĕ мехелне эпир халăх сăввин йĕркисене пĕлтерĕшсĕр сасăсемпе кăларса та туйса илетпĕр: ай-хай-хай-хай / ай-хай-хай (çак татăксене çапла çемĕпе туй ачисем кăшкăрса калаççĕ), ай-яр, ай-яр / ай-яр-ах (туй арăмĕсен юрринчи хушса юрламалли) т. ыт. те.

Ахальтен мар вилмĕсĕр «Нарспи» авторне те çак халăхăмăрăн сăвă кӳлепи килĕшнĕ. Çав ылтăн касăк принципĕ «Нарспин» сăвă йĕркисенче çеç мар, сюжетĕнче те вăйлă палăрать. Эппин, поэт гармони енне ăнтăлнине эпир содержанире çеç мар, формăра та курма пултаратпăр.

Халĕ П.Хусанкайăн «Çирĕм улттă» поэмине илер. Хайлавăн сюжечĕ аталанса, акăлчан капитанĕ Ретшинальтăн пуçĕнче Бакку комиссарĕсене вĕлерес шухăш еплерех пурнăçланни çинчен, мĕнпе вĕçленни çинчен çырса

[12] Ку ыйтупа тĕплĕнрех çак ĕçе пăхăр: *Чагдуров С.Ш.* Стихосложение ГЭСЭРИАДЫ / С.Ш. Шагдуров. – Улан-Удэ, 1984. – С. 42-47.

кӑтартнӑ. Ку ӗнтӗ развязка пайӗ. Мехел вырӑнне поэт хӑех палӑртнӑ: вӑл икӗ йӗркине ыттисенчен курсивпа уйӑрнӑ:

Пӗр никам та пӗлмест халӗ –
Темшӗн
Кирлӗ пулнӑ кун чухлӗ салтак.
Ретшинальт куппере пӗчченех мӗн
Çирӗм улттӑмӗш пусӑ алтать[13].

Поэма кульминацийӗ, мехелӗ çак çавраран пуçланать те тепӗр виçӗ çавра çав шайра тӑрать, каярах вара майӗпен чакма пуçлать.

Халӗ хайлаври мехел вырӑнне ылтӑн касӑк вырӑнӗпе шайлаштарса пӑхар. Поэмӑра мӗнпурӗ 69 çавра. Эппин, ылтӑн касӑк вырӑнӗпе шайлаштарса çаврасем тӗлнерех пулмалла пек (4 + 3 = 7 е 40 + 30 = 70 çавра). Илсе кӑтартнӑ çавра поэмӑра вӑтӑр çиччӗмӗшӗ. Шӑп та лӑп хӗрӗхӗмӗш çаврара (!) кульминаци хӑйӗн тӳпине çитет.

Ылтӑн касӑк принципне тӗпе хурса çырнӑ хайлавсем П.Хусанкайӑн сюжет шайӗнче те, сӑвӑ çемми шайӗнче те сахал мар. Ку тӗлӗшрен пирӗн тӗпчемелли-сӑнамалли пайтах. Ӳлӗмрен мехел теорине ытти поэтсен поэтикине тӗпченӗ чухне те усӑ курмалла-тӑр. Çакӑ талантлӑ хайлавсен килӗшӳлӗхӗпе янравлӑхӗн чӑн сӑлтавӗсене тупма пулӑшасса шанас килет.

2.

Чӑваш литература наукин паян тумалли ӗçӗсенчен пӗри вӑл – историлле поэтикӑна никӗслесе çитересси, профессилле литература поэтикин аталанӑвне тӗпчесси. Ку тӗлӗшпе хальлӗхе нимӗнех те тӑвайман-ха эпир. Чӑваш халӑх сӑввин аталану çулӗ-йӗрне шырама хӑтланнӑ ӗçсем курӑнкаларӗç пулсассӑн[14], çырулӑ поэзи кӳлепине вара историлле куçпа пӑхни юлашки çулсенче пачах та пулмарӗ темелле[15].

1987 çулта Чӑваш патшалӑх университечӗн икӗ студенчӗ, çак статья авторӗ ертсе пынипе, диплом ӗçӗсем çырчӗç. Пӗри (Ю.Е. Фомина) «Революцичченхи çырулӑ сӑввӑн аталанӑвӗ», тепри (Л.А. Скворцова) «Чӑваш силлабикӑлла сӑввин 1920-30 çулсенчи аталанӑвӗ (Н.В. Шупуççынни, Н.И. Шелпи тата И.Е. Тӑхти сӑввисем тӑрӑх)» темӑсемпе ӗçлерӗç. Çав ыйтусене хускатнӑ май пирӗн сӑвва аталану куçӗпе еплерех тишкермелли мелсем çинчен шухӑшлама тиврӗ. Ку тӗлӗшрен вырӑс литературине тишкерекенсен те çирӗпленсе çитнӗ меслет

[13] *Хусанкай П.* Уяртсан / П.Хусанкай. – Шупашкар, 1928. – 66 с.

[14] *Родионов В.Г.* Чувашское и тюркское стихосложение / В.Г. Родионов. Шупашкар. 1966. К вопросу о генезисе чувашского фольклорного стиха. – Сов. тюрк. 1982. – №5. – С. 28-33.

[15] Чӑваш çырулӑ поэзине аталану тӗлӗшӗнчен тӗпчени Н.И.Ивановӑн хӑш-пӗр ӗçӗсенче пур. Çапах та вӗсенче поэт сӑвӑ поэтикине системӑлани çителӗксӗр. Пӑхӑр: *Иванов Н.И.* Чувашский стих / Н.И. Иванов. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1977. – С. 160.

таврашĕ çук-ха[16]. Пуррисенче кашни сăвă компоненчĕ пĕр-пĕринпе еплерех çыхăнура пулнине тĕпчемен. Çакă вара тĕпчевçĕсене сăвă кӳлепине шухăшĕнчен татса тĕпчесси енне туртать. Çав формализм еннелле илсе каякан çула шухăшпа кӳлепене пĕрлĕхре тĕпчес еннелле илсе тухаканни вăл – системăлла тишкерӳ меслечĕ.

Системăлла тишкерӳре тĕпре сăвă компоненчĕсем пĕр-пĕринпе еплерех çыхăнура пулнине тĕпчесси тăрать. Кунта сăвă компоненчĕсен шутне тĕрлĕ повторсем те, çемĕ-састаш та, çавра та, жанр палли те, текстра хускатнă темăсемпе проблемăсен йышĕ те кĕрет.

Чăваш силлабикăлла сăввин аталанăвне тĕпчес тĕллевпе çапларах программа структури сĕнме пулать:

I . Сăвă шухăшĕпе тытăмĕ.

1. Автор
2. Сăвва çырнă вăхăт
3. Сăвăра хускатнă темăсемпе проблемăсем
4. Сăвă жанрĕ
5. Сăвăри йĕрке хисепĕ
6. Сăвăри çавра хисепĕ

II. Çаврасен тытăмĕ

А: 1-мĕш çавра:

1. Çаврари йĕркесен хисепĕ
2. Çавра йĕркисенчи сыпăксен хисепĕ
3. Йĕркесенчи сыпăксен ушкăнĕсем
4. Йĕркесенчи сингармонизм
5. Сасă повторĕсем

Ă: 2-мĕш çавра...

Б: 3-мĕш çарва...

Пĕрремĕш ушкăна сăвă шухăшĕпе тытăмне пĕтĕмĕшле палăртакан компонентсене кĕртнĕ. Вĕсем сăввăн содержанине, унăн пафосĕпе проблематикине уйăрса илме пулăшаççĕ. Иккĕмĕш ушкăнрсем вара сăввăн шалти тытăмне, çемĕ, кĕвĕлĕх, эмоци-туйăм йĕркелекеннисем.

Çаврана тытăмĕ тĕлĕшĕнчен тишкермелле пулсассăн, унăн йĕркесен хисепĕпе йĕркери сыпăксен хисепне (силлабикăллă сăвăра) шутламалла. Çавăн пекех йĕркесенчи сыпăксен ушкăнĕсемпе сасă повторĕсене те шута илмелле. Çак компонентсем кашни сăввăн тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Истори куçĕпе пăхса,

[16] Кунта çавăн йышши ĕçсенчен çаксене асăнмалла: *Калачева С.В.* Эволюция русского стиха / С.В. Калачева. – М., 1986; *Гаспаров М.Л.* Очерк истории русского стиха / М.Л. Гаспаров. – М., 1984 т. ыт. те. Пĕрремĕш ĕçĕнче ытларах çырса кăтартас мел, иккĕмĕшĕнче вара статистика мелĕ тĕп вырăнта тăрать. Çакăн йышши ĕçсенче сăвă кӳлепине унăн шухăшĕпе тачă çыхăнтарса пăхни питех те çителĕксĕр.

эпир сăввăн вăл е ку элеменчĕ хăш вăхăтра тухăçлă е тухăçсăр пулнине çеç мар, мĕншĕн çапла пулнине те ăнлантарма пултаратпăр.

Диплом ĕçĕсем çырнă чухне эпир «Сăвва çырнă вăхăт» пайри тапхăрсене виçшер çултан уйăрса пăхнăччĕ (совет тапхăрне): 1. 1917-1919; 2. 1920-1922; 3. 1923-1925; 4. 1926-1928; 5. 1929-1931; 6. 1932-1934; 7. 1935-1937 т. ыт. те.

Енчен те сăвва 1924 çулта çырнă пулсассăн, ун тĕлне 3 номер çырнă. 1937 çулта хайлани тĕлне «7» лартнă, малалла та çавăн пекех.

«Сăвăра хускатнă темăсемпе проблемăсене» паян мĕнпурĕ вунна пайланă:

1. Çут çанталăк вăхăчĕ, çут çанталăк пулăмĕсем, уй-хир, вăрман, кайăк-кĕшĕк т. ыт. те.

2. Тăван кил, ял, халăх, чĕлхе, культура, тăванлăх, туслăх, пĕрлĕх, ĕç çинчен.

3. Савни, юрату, çамрăксен шӳчĕ, вăййи-кулли.

3а. Çитмен пурнăç, социалла танмарлăх, тĕттĕмлĕх, вăрçă.

4. Ватлăх – çамрăклăх.

5. Абстракцилле философи ăнлавĕсем (телей, инкек, савăнăç, шухăш).

6. Уйрăм çынран хăйĕнчен килекен çитменлĕхе пула аталанакан сюжет

7. Революци çĕнтерĕвĕ.

8.Çĕнĕ пурнăç çитни.

Паллах, çакăнта палăртнă темăсемпе проблемăсем тулли те мар, вĕсен чиккисем те чылай чухне уçăмсăр. Кунта çак пайсене силлабикăлла сăвва тĕпченĕ май йĕркеленине, çавăн йышши сăвăсем вара ытларах революцичченхи тапхăрта пуç пулса тăнине те манма кирлĕ мар. Çапах та меслечĕ хăй (сăвăсене темăсемпе проблемăсем çине уйăрса пăхни) перспективлă пек. Вăл е ку тема сăввăн экспрессийĕ, тональноçĕ урлă унăн поэтикине витĕм кӳме пултарнине эпир Н.Шелепи, Н.Шупуççынни тата И.Тăхти поэзине тĕпченĕ чухне те куртăмăр. Çак содержани формăпа еплерех çыхăннине кăтартакан мелпе П.Хусанкайăн силлабикăлла тата силлабо-тоникăлла сăввисене те тишкермелле. Ку вăл чăваш литературовечĕсем çывăх вăхăтрах тумалли ĕç.

Сăвă жанрĕсенчен хальлĕхе çаксене палăртнă: 1 – юрă, 2 – такмак, 3 – юрату, 4 – гражданла сăвă, 5 – философилле сăвă, 6 – сăвă-ӳкерчĕк, 6а – сатирăлла сăвă, 7 – поэма, 8 – юптару, 9 – сăвăлла юмах, 10 – баллада, 11 – сăвă-халал.

Сăвăри йĕрке хисепĕсене ушкăнлани вара сăвă калăпăшĕ тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ авторсен еплерех пулнине те сăнама пулăшать. Хальлĕхе эпир çапларах ушкăнсем палăртрăмăр: 1: 4—12 йĕрке, 2: 12—24 йĕрке, 3: 24-36 йĕрке, 4: 36-48 йĕрке, 5: 48-60 йĕрке, 6: 60-72 йĕрке, 7: 72—84 йĕрке, 4: 36-48 йĕрке, 5: 48-60 йĕрке, 6: 60-72 йĕрке, 7: 72-84 йĕрке, 8: 84-100 йĕрке, 9: 100-120 йĕрке, 10: 120 йĕркерен ытларах.

Сăвăри çавра хисепне виçшер çавраран пайлама тиврĕ: 1: 1-3, 2: 4-6... Вунпĕрмĕш номерне вара 30 çавраран ытлараххисене палăртнă.

Çаврасен тытăмне тĕпчеме чи малтан çаврари йĕркесен хисепĕнчен тытăнмалла-тăр. Паллă ĕнтĕ, пирĕн поэтсем тăватă йĕркеллĕ çаврасемсĕр пуçне икĕ, виçĕ йĕркеллĕ çаврасемпе те тухăçлă усă курнă. П.Хусанкайăн ултă йĕркеллĕ çаврасем те сахал мар тĕл пулаççĕ. Çавна май эпир вунтăватă йĕркеллĕ çаврана çитичченех номерлесе тухрăмăр (1:1 çавра, 2:2 çавра т. ыт. те.).

Çавра йĕркисенчи сыпăксен хисепне тата сыпăксен ушкăнне (силлабикăлла сăвăсенне) палăртни те сăвва тĕпченĕ чухне питĕ кирлĕ. Йĕркесенчи сыпăксен çак ушкăнĕсем ытларах пулаççĕ: 4 + 3, 4 + 4, 5 + 3 т. ыт. те.

Программăра сасă повторĕсене тĕпчемелли пай та кĕртнĕ. Унта çапларах повторсене палăртнă: 1. Йĕрке пуçĕнчи повторсем, 1.1 Пĕр йĕркерен, 1.2 Йĕркесенчи, 1.3 Пĕр йĕркери тата йĕркесенчи. 2. Йĕрке варринчи повторсем, 2.1 Пĕр йĕркери, 2.2 Йĕркесенчи, 2.3 Пĕр йĕркери тата йĕркесенчи, 3. Йĕрке вĕçĕнчи повторсем, 3.2 Йĕркесенчи повтор (састаш).

Сăвăри сингармонизма тĕрлĕ тĕссене уйăрас ыйтăва тĕпĕ-йĕрĕпех тĕпчемен-ха. Çапах та ăна икĕ ушкăна пайласси тавлашусăр-тăр: 1) палаталлă тата 2) велярлă сасăсем. Икĕ ушкăнне те пĕр йĕркери тата темиçе йĕркерисем çине уйăрса пăхма пулать. Тепĕр хут калатăп: кунта шухăшласа çитермелли сахалах мар.

Çак программăпа вăл е ку поэтăн кашни сăввипе çаврине тишкермелле. Çапла тусассăн эпир унăн сăввисен поэтики тĕрлĕ тапхăрта еплерех пулнине, мĕнле сăлтавсене пула улшăнса пынине пĕлме пултарăпăр. Çав мелпех паллăрах поэтсен пултарулăхне тишкернĕ хыççăн эпир чăваш çыруллă сăввин аталану çулĕ-йĕрне те палăртаймăпăр... Ку тĕлĕшрен революциченхи тата 20-30-мĕш çулсенчи силлабикăлла сăвва, тĕпрен илсен, тишкернĕ темелле[17]. Малашне силлабо-тоникăлла сăввăн аталану çул йĕрлеме пуçăнмалла.

Паллах, поэзие, сăвă поэтикине тĕпчемелли-тишкермелли мелсем татах та чылай. Калăпăр, кунта эпир пĕр сăвва тишкермелли тĕрлĕ мелсем çинчен те, сăвва функци, вулавçă психики урлă тĕпчесси çинчен те каласа тăмарăмăр. Пирĕн поэзи классикине тĕрлĕ мелсемпе тишкермелле тени паян никама та тавлаштармасть пулĕ. Ку тĕлĕшрен эпир К.Ивановпа Çеçпĕл Мишши хайлавĕсене те, П.Хусанкайпа В.Миттан сăввисене те пур енлĕ тишкернĕ теме пултараймастпăр.

1988.

[17] Ю.Е.Фомина хăйĕн диплом ĕçĕнче революциченхи чăваш поэчĕсенчен хĕрĕх пиллĕкĕшĕн сăвви-поэмине пăхса тухрĕ, программа тăрăх сăнаса мĕнпурĕ вунă таблица турĕ. Вĕсенче вăл сăвă компоненчĕсем тĕрлĕ авторсен тĕрлĕ вăхăтра еплерех тĕспе тĕл пулнине, çавна май силлабикăлла сăввăн революциченхи аталанăвне аван кăтартса пачĕ. Л.А. Скворцова вара çав ыйтусенех Н.Шелепи, Н.Шупуççынни тата И.Тăхти пултарулăхĕпе çыхăнтарса тĕпчерĕ.